## ЮРРĂМА

Пиччем те, йăмăкăм та çуккă ман,
Чăн тус та эп тупман-ха ку таран.
Тен, çавăнпах, çунатлă юррăмçăм,
Ĕмĕртенпех эс манăн тусăмçăм.

Нихçан та пăрахмастăн эс мана,
Вăхăчĕпе мансассăн эп сана —
Тăван аппа пек эс пăшăрханан,
Тартмастăн йăмăкна ху куçунтан.

Каç-каç, хуйха-суйха манас тесе,
Сана каллех эп пулăшма чĕнсен, —
Пĕртен-пĕр тусăм, яланах манпа
Эс калаçатăн уçă кăмăлпа.

Пур йывăра тиетĕп сан çине,
Ал тăснă пек тăсса йĕркўсене,
Ăна ним кўренмесĕр эс йăтан,
Ыратакан чуна лăплантаран.

Çук! Эп ӳпкелеместӗп шăпана:
Сана вăл пачӗ, юррăмçăм, мана.
Эс пур çинче — умра тумхах е чул —
Хăрушă мар, ансат пырать ман çул!